К84.09(=Чув)6
Т19
Ч-40673

ентина ТАРАВАТ

# ЧУН ТАРАСИ



Национальная библиотека ЧР
4-040673

К 84.09(=Чув)6
Т19

Валентина ТАРАВАТ

# ЧУН ТАРАСИ

Сăвăсем

Шупашкар
2001

УДК 821.512.III
ББК 84 /2 Рос-Чув/-5
Т — 19

Тарават В.
Т-19 **Чун тараси.** Сăвăсем. Шупашкар, Чăваш Республикинчи писательсен «Калем» издательстви - 2001 ç. 88 стр.

Тăван çĕршыв хаклăхĕ, чун канăçсăрлăхĕ, илем шыравĕ, паянхи пăтравлă пурнăçри çыннăн вырăнĕ, юрату управлăхĕ, çемье тăнăçлăхĕ — акă мĕн сăнарланнă авторăн чĕрене пырса тивекен, шанăç кӳрекен сăввисенче.

Лирикăллă геройăн кăмăл-туйăмĕ ирĕк, сарлака, уçă, илĕртӳллĕ.

20 __ 13 СЕН 2017
Ч-40673
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© «Калем» издательство.

# СУНАТĂП ЫРĂ КУН

* * *

Ах, пурăнăç! Ах, пурăнăç!
Нумай кулянмалли...
Вăл çук. Ку çук.
Ман пурĕпĕр
Апат пур чун валли:

Янраттарап-и юррăма,
Е çаптарап ташша —
Сапатăп хамăн куллăма,
Сапатăп эп ăшша.

Çитет-и вăл тăван патне,
Е ют патне çитет —
Хуйха вырттартăр вăл ӳпне —
Çын хуйхăпа ĕнет...

Пĕри, тепри
сипленейсен —
Сипленĕ манăн чун.
Туссем, ютсем те тăвансем,
Сунатăп ырă кун!

## ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ, ТЕЛЕЙЛĔ ПУРĂН

Вĕçет, вĕçет, вĕçет-çке юрă,
Çунат хушса, çӳл тӳпере.
«Тăван çĕршывăм, телейлĕ пурăн,
Телейлĕ пурăн», — юрлать чĕре.

Савсам мана эп савнă евĕр,
Сана сунап çут ăраскал.
Таса пулинччĕ ялан тӳпемĕр,
Ĕçсем пулинччĕç ялан кал-кал.

Пĕр-пĕринпе тату пуласчĕ,
Амаçури ан пулччĕ эс.
Хăв халăхна сан сума сăвасчĕ, —
Тата сана ман мĕскер сĕнес?

Вĕçет, вĕçет, вĕçет-çке юрă,
Юрлать ман чун, юрлать чĕре:
«Тăван çĕршывăм, телейлĕ пурăн,
Хĕвел çутаттăр тăван çĕре!»

* * *

Ăс-тăна илеймĕн укçалла,
Турă пană пире йăлт виçеллĕ.
Ăс-тăна пайлаймăн çурмалла,
Пайлама сĕнсен те теветкеллĕх.

Упрама пĕлесчĕ ăс-тăна,
Варлас марччĕ çӳп-çаппа пĕр шутсăр.
Вăл, папак пек, тимлĕхсĕр шăнать,
Ывăнать, тертлентерсессĕн шуххăн.

Упрама пĕлесчĕ ăс-тăна:
Вăл ача пек пит черчен, чăнах.

* * *

Тӳпе те йăлтăркка паян,
Йăлтăртатать çаран.
Ярас килмест куна сая —
Чупас килет çарран.

Ирхи асамлă сывлăша
Каçса кайса çăтас.
Чĕр шыв пек тăрă сывлăмпа
Пите-куçа çăвас.

Çак ырă ир пек, манăн кун
Иртинччĕ юрласа...
Тӳпеçĕм, ялкăш та — ан çун,
Ман пирĕшти пулсам!

* * *

— Кама савса юрлан, саркайăк?
Мĕне саватăн?
— Пурнăçа.
Тата çынна савса юрлатăп:
Хăй шăпине çын — хăй хуçа.

Ал тавăрса ĕçлет пулсассăн,
Тупать вăл кунлăх çăкăрне.
Малашлăха савса пăхсассăн,
Кĕтсе илет хăй телейне.

Ак, эпĕ ирĕкре. Юрлатăп.
Çак ырă вырăна мухтатăп.
Анчах иртет те савăк çу —
Йăлттам пуласлăх маншăн çук.

* * *

Кам мĕнле ăнланать илеме:
Кам-тăр юр юрласа киленет.
Кам-тăр — канăç шырать сăвăра,
Ўнерте ăна хăшĕ курать.

Пĕрисем - юратаç чĕр чуна,
Теприсем — ўстереççĕ хунав...
Черккере кам курать илеме —
Хăй чунне хăй пуçлать хĕнеме...

Мĕн чарать илеме хаклама?
Черккере пултарать вăл путма.

* * *

Йĕпписем ял-ял выляççĕ
Çĕмĕрт аллинче:
Селĕм эрешсем пулаççĕ
Шупăр айĕнче.

Улмуççи те питĕ харсăр —
Вăл çыхать кĕпе:
— Çур уявĕ иртмĕ мансăр,
Ĕçлĕп çĕрĕпех.

Чиесем ним шавламасăр
Шурă пир тĕртеççĕ.
Ах, мĕн чул пике — курçамăр! —
Шăпине кĕтеççĕ...

Çĕмĕрт, çĕмĕрт, питваскатăн
Шупăрна çыхма.
— Сивĕпе,тен, канашлатăн
Эсĕ тĕл пулма?

Пур-тăр çав санра хаярлăх:
Эс çеçке çурсан,
Сивĕ те илет каваррăн
Çавипе сулса.

* * *

Юратаймӑн ҫыншӑн, юратаймӑн,
Ҫыншӑн пурӑнаймӑн пурнӑҫа.
Ах, мӗн-ма пӑхатпӑр ҫӑмӑлттайӑн:
Калӑн, Ҫӗр ҫинче пӗр эс хуҫа.

Ҫӗр ҫинче ҫителӗклех ырри те...
Темшӗн сахал мар-ҫке усалли.
Ыр ҫынна, хӑш чух, манать Турри те, —
Хыт лекет ӑна кун-ҫул хулли.

Ҫанӑ таварса ӗҫле, эс, тар тӑк,
Пул таса, типтер юратура.
Тилӗ пек, яка чӗлхеллӗ мар-тӑк —
Тупӑнать хураканни ура.

Юратаймӑн ҫыншӑн, юратаймӑн,
Пурӑнаймӑн ҫыншӑн пурнӑҫа.
Яланах «Ҫӗр кӑвапи» пулаймӑн,
Сӑмахпа ӗҫне пул хӑв хуҫа.

* * *

Ыраш аксан-вырса илеймӗн тулӑ.
Кӗтсе илеймӗн пыл — тӑвар парсан...
Чуну кӳтсен — ӑҫтан ҫуралтӑр кулӑ?!
Хунав та чӗрӗлмест-ҫке пӗр хӑрсан...

* * *

Шурă, шурă хут листи,
Шурă, шурă пирĕшти,
Кам чунне эс итлемен-ши?
Кампала пĕрле йĕмен-ши?

Кампала эс савăнман,
Кампала тупа туман?

Миçе çын куçне эс уçнă,
Мĕн чул шăпана эс хуçнă?
Мĕн кăна илтместĕн эсĕ!
Мĕн кăна пĕлместĕн эсĕ!

Тӳсĕмне виçес пулсан
Ларĕччĕ тĕнче тулса...

* * *

Эп вут çине пусасшăн марччĕ...
Йăнăшрăм-ши вара, ăнман.
Кĕтмен çĕртен тăшман çуралчĕ.
Юнать — сисетĕп — хыçăмран.

Тен, кăмăла хытармаллаччĕ
Пĕлмен, илтмен, курман пулса.
Кайран епле пурăнмаллаччĕ?!
Çурăлмаллаччĕ-им тулса?!

* * *

Юлашки хут йӑл! кулчӗ,
Сывпуллашрӗ ҫу кунӗ.
Канлӗнех эп туятӑп хама.

Ҫулла мар, кӗркунне,
Ҫулҫӑ ӳкнӗ чухне,
Юрататӑп сӑмах шырама.

Анлӑрах шухӑшсем,
Ӑслӑрах туйӑмсем,
Вичкӗнрех куҫӑмсем
Кӗркунне...

Ытлашши утӑмсем,
Ҫилхӑван-сӑмахсем
Ала витӗр тухаҫ
Ун чухне...

* * *

Ывӑтса яр, ывӑтса
Тикӗтленӗ пушшуна...
Ҫиллӳне ҫӑтса, кулса
Кӗтсе ил эс нушуна.

Мӗн нуши-тӑшман хулли?!
Шӑрӑхра типет вулли.
Йӑл! кул, типтӗрех хулли,
Пултӑр вӑл тӗнче кулли...

* * *

Ӳтне витермеллех
Чулпа пересшĕнччĕ.
Переймерĕм...
Аллăм ҫĕкленмерĕ.

Чунне витермеллех
Сăмахсем каласшăнччĕ.
Калаймарăм...
Чĕлхе те ҫаврăнмарĕ.

Пуҫа яш! каҫăртса
Иртсе каясшăнччĕ.
Иртеймерĕм...
Мăнкăмăллăхăм ҫитеймерĕ.

Мĕскер ку ман?
Е вăйсăрлăх,
Е — шеллени?!

* * *

Тус-тантăш хапăл тунă ачаран,
Ватти-вĕтти тĕртсе яман мана.
Пуҫ тайнă кăмăлтан ӳсен-тăран.
Пуянлăх ҫеҫ кĕмен ман арчана.

Ҫут хаваспа та тунсăх юнашар,
Пĕрне-пĕри, тен, ҫул парасшăн мар.
Пĕри сĕнет: «Ҫисем, ҫисем симпыл».
Сĕнет тепри: «Ҫи пăрăҫпа тăвар...»

* * *

Çăтрăм ятăм янăрас кулла,
Мĕншĕн пит салху çурхи хула?!
Пĕтĕм çут тĕнче халь вăранать,
Кам кама-тăр чĕререн савать.
Ах, мĕнрен-ши ман хунав хăрать?
Мĕншĕн, камшăн чунĕ ыратать?
Тен, сана, тин чĕрĕлнĕ хунав,
Вăл парасшăн тăванла хурав.
Тен, сана, яш-кĕрĕм, шухăскер,
Вăл ярать сиплевлĕ шухăшсем...

Чун туять, каласшăн вăл пире:
— Упрасамăр çĕр-аннемĕре!

* * *

Пурте хĕрарăмран çуралнă —
Çĕр çинчи чи тўсĕмлĕ, ачаш,
Чи вашават чунран.
Пĕр çĕр çинче пурнатпăр.
Хĕвелпеле тўпемĕр айĕнче
Пĕр сывлăшпа сывлатпăр,
Пĕр Турăран ыйтатпăр.
Вăл панине кăна
Тĕрлĕ виçепеле виçетпĕр:
Кашниййĕн хăйĕн виçи —
Чун тараси...

## ХĔРАРĂМА

Ирпелен хĕвел савса пăхсассăн
Çутă тĕкĕр евĕр кантăкран,
Ачусем ахăлтатса кулсассăн —
Чи телейлĕ çын эс пурнăçра.

Тĕкĕртен пăхса тапса сикен-тĕк,
Уçăлсассăн алăк юрласа:
Çакă вăл — телей, чунпа сисетĕн.
Мĕншĕн сан çӳрес пуçа усса?

Пиллĕ сăмаха ăша хыван-тăк
/Яланах çутатттăр пурнăçа/,
Алăк юрлĕ, тĕтреленмĕ кантăк —
Пурнăçра телей, телей хуçа!

Ик алла пин-пин ĕç...
                    Тăрмашатăн,
Черетре тăрас вĕсем кĕтсе.
Чĕрĕлле хĕрӳ памасть вут-шанкă.
Мĕн илемĕ çурт ăшши пĕтсен?!

* * *

«Шыв вăл — укçа», —
çынсем калатчěç ěлěк,
Анне калатчě: «Шыв вăл — çут тěнче».
Миçемěш хут тěлленчě-ши ку тěлěк«—
Тăп-тăрă шыв.
Тăратăп варринче.

Пăтранасран асăрханса утатăп...
Ěмěтěмре те вăл пулман — укçа.
Куç шăрçине упранă пек упратăп
Кил-йышăма, тирпейлě пурнăçа.

Ху сыхлансан, шăпа та сыхлě, теççě.
Анчах кун-çулăм лăпланасшăн мар:
Хăш чух шеллевсěр çумăрсем лўшкеççě,
Хăш чух сикет чарусăр вут-кăвар.

* * *

Пурăнатпăр:
Ěçлетпěр,
Утатпăр,
Чупатпăр...
Пурлăх пухатпăр.
Ăс-тăн хушать,
Чěре хушмасть.
Чěре хушать - ăс-тăн хушмасть.
Хăшне итлемелле-ши?
Хăшне пăхăнмалла-ши?
Çăнăха хывăхран епле уйăрмалла-ши,
Этем мар, çын пулас тесен?

* * *

Курнине куçăмпа,
Илтнине хăлхампа
Пуçăмра кăмăлтан эрешлерĕм.
Пĕрлештертĕм чунпа,
Хутăштартăм юнпа,
Чун-чĕре хушнине те итлерĕм.

Йышăнсам, шурă хут!
Сăмахсем — ырă ут
Пулайса малалла ăнтăлинччĕç.
Е ачаш шăпчăк пек,
Е япшар чĕкеç пек
Ĕмĕтри çынсене тыткăнлинччĕç.

Кирлĕ мар-ха мухтав,
Туссене — пысăк тав.
Сутăнман, сутăнмастăп, сутмастăп.
Килĕм уçă яри,
Чунăм уçă яри.
Ыр сунан çынсенчен ютшăнмастăп.

## ВАТТИСЕН ÇУРТĔНЧЕ

Тумбочка çинче виç сăнÿкерчĕк:
Хĕрача тинкернĕ инçене.
Кинеми те ун пекех чиперччĕ,
Куç хыватчĕç пурте пикене.

Ку вăл — кинемийĕн хаклă хĕрĕ.
Амăшĕ хăçан-ши асне кĕрĕ?!

Сарă каччă тăснă баянне,
Аслă куçĕсем шевле тăкаççĕ,
Савăнса та тĕмсĕлсе пăхаççĕ
Калас евĕр:
— Эп санпа, анне!

Арăмĕ-çке ывăлĕн — майра,
Амăшне курма ярать сайра.

Чăрсăррăн пăхать кĕре арçын:
Тутлăпа йÿççе пĕрле пайланă.
Вăхăтсăр-çке кайрăн, кил хуçи.
Кирлĕччĕ сулмак сăмаху санăн.

Саланмастчĕ, тен, тăван кил-çурт.
Кинеми мĕн-ма халь питĕ ют?

Ватлăхне сиплеççĕ халь унне,
Тăван пек пуласшăн тăрăшаççĕ.
Чĕринче анчах ялан:
— Анне! —
Тăванран тăван сассем янраççĕ.

Сăнÿкерчĕксем — тăван сынсем.
Канлĕ çывăраççĕ пуль вĕсем...

* * *

Юр пӗрчисем ӳкеҫҫӗ ман ҫине
Ҫине-ҫине, ҫине-ҫине...
Мӗн-ма вӗсем ӳкеҫҫӗ ман ҫине?!
Мӗн-ма пурте ларасшӑн пуҫ ҫине?

Пит-куҫ ҫинче сӳнеҫҫӗ ҫав вӗсем,
Пуҫӑм ҫинче ҫеҫ ӗмӗрлӗх вӗсем...

Юр пӗрчисем ҫаплах, ҫаплах вӗҫеҫҫӗ...
Тур панине илсем ӳпкевсӗр, теҫҫӗ.

* * *

Кӗрлет самана, эй, кӗрлет,
Ҫак ахӑр-эсрел самана...
Чуна тӑрмалать, хӗтӗртет —
Пӑрасшӑн ҫултан вӑл мана.

Чӑнах та, пӗр тикӗс пулман
Ман ҫулӑм пурнан пурнӑҫра.
Кам чунсӑр — тен, ҫав йӑнӑшман,
Кам ӗҫсӗр — тен, ҫав такӑнман.

Юнпа анне панӑ чӗре
Хӑйпе хӑй кӗреймӗ чӗрре:
Ик пуҫлӑ пулаймӑн пуйма,
Ик чунлӑ пулаймӑн суйма.

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

Ч-40673

* * *

Ылтӑнпала ылтӑн ылмашӑҫҫӗ,
Шырамаҫҫӗ ырӑран ырра.
Кашкӑртан та кашкӑр хӑрамасть-ҫке,
Мӗншӗн, мӗншӗн ҫын хӑрать ҫынран?!

Мӗншӗн пиччӗш чӗтрене ерет-ши
Шӑллӗн ҫурчӗ хӑтлӑрах пулсан?!
Мӗншӗн, мӗншӗн татӑлса йӗрет-ши
Пӗчӗк чун «ют» амӑшне курсан?!

Мӗншӗн кӳршӗ ик ҫӑра ҫакать-ши
Каҫнӑ чух кӳрше самантлӑха?!
Мӗншӗн куҫҫульпе тӗнче тулать-ши?!
Мӗн ҫитмест-ши шавлӑ халӑха?!

Кӑшкӑрса ыйтсан та — ҫук явап.
Ыйтӑвӗ ҫаплах мӑя пӑвать.

* * *

Ан васкат вӑхӑта, ан васкат.
Вӑхӑтра — йывӑҫ ҫулҫӑ тӑкать.
Вӑхӑтра — сив хӗлле, ырӑ ҫу.
Пӑхӑнмасть вӑхӑта калаҫу.

Вӑхӑта пӑхӑнмаҫҫӗ ӗҫсем,
Ӗҫсене пӑхӑнмаҫҫӗ ҫынсем.
Харкашу, тӗркӗшӳ
урӑм-сурӑм...
Вӑхӑт хӑй валеҫет.
Ан юл сумсӑр...

## КАЛАÇУ

— Эс ыртăн-им, хĕлле?
Хĕрсех тумла тумлать.
Каятăн-им, элле?
Тен, çуркунне пулать?!

— Апла эс ан кала.
Эп ырас çук нихçан.
Шутларăм:
 пĕр кана
Хĕвел пулать хуçа.
Лăплантăр çил-тăман,
Хавшатăр шартлама —
Тĕл пултăр тус-тăван,
Пĕр шиксĕр, савăнма.
Янратăр сăрт çинче
Ача-пăча кулли.
Хавас çын чĕринче —
Телейĕм ман тулли.
Капла та пит нумай
Хытартăм кăмăла...
Чупаç кунсем пĕр май.
Ак, тухăп та çула...

## ЧУН ЫРАТАТЬ

Тăрăшсах пирус ĕмеççĕ.
Тем палкаççĕ, ихĕреççĕ.
Ик аякки-тăвайкки...

Ăс пама майне пĕлеймĕн.
Вĕрентсе сăмах чĕнеймĕн —
Хатĕрех чышки-машки...

Юнашар тăма — чĕр тамăк —
Хăлхуна тултар хăть мамăк...
Хупах çулĕ — паллă çул.

Çÿçĕ-пуçĕ, тумĕ-пĕр.
Тахăш йĕкĕт, тахăш хĕр...
Çакă паллă:
чунĕ - чул.

* * *

Çут тĕнчене хăв ытамна илеймĕн.
Пур çыншăн пурăнаймăн
пурнăçа.
Çын телейне курсассăн — эп телейлĕ.
Кунта вара эп —
ирĕклĕ хуça.

Çын чирĕпе эп чунăмпа чирлетĕп.
Эп — хурлăхлă, çын хурлăхне курсан.
Тиркевсĕр чĕремре —
çăтмах тĕплетĕп.
Утатăп хирĕç,
ытама сарса...

* * *

Мĕнрен илетĕп эп вăй-хал?
Мĕнпе ăна хушса пурнатăп?
Çут хĕвелтен килет кал-кал,
Ăш çумăра савса çăтатăп.

Вĕлле пек йышлă тăванран.
/Чăвашшăн çук инçе тăван/
Тата-и?
Уçă тăшманран.
/Хăратăп йăпăлти тусран/.

Асамлă вăй-и?
Çемьере.
Вăл сывă — эпĕ тÿпере...
Пĕлетĕп,
Çăкăрпа анчах
Киленес çук ман чун пачах...

* * *

Çиçет çут çăлтăрла куçу.
Вăл, кÿлĕ пек, таса.
Юхса пырать-çке пурнăçу,
Пырать вăл юрласа.

Тулса телейĕ тăкăнать,
Анчах шăпа — кăра.
Ыр çын /нумай чух/ такăнать.
Ман саншăн чун хăрать.

* * *

Ах, самана!
Ăçта илсе каян?!
Миçе çын ĕмĕтне шеллевсĕр татрăн?!
Çула тухмашкăн çăмăл мар паян.
Пĕртăвансем те ют пек пурăнатпăр.

Туртать те туйăм — çӳп-çӳхе кĕсье.
Ыр кăмăлшăн çул алăкне уçмаççĕ.
Савса каласчĕ:
— Тус-тăван, тавсье!
Çук, тӳресем тăванлашма хушмаççĕ...

Тăван-пĕтенсĕр — хăрăк туратсем...
Йăх йăмрине чеелĕх кăшламасть-ши?
Ав, анăçран васкаççĕ «тăвансем».
Ав, тухăçран васкаççĕ «йăхташсем».
Пĕр-пĕр «тăван» халь
Саламат явмасть-ши?...

* * *

Ыр сăн-сăпатлă кĕреке,
Хуçи те чăн асамçă евĕр —
Мерчен сасси ытла та евĕк.
Мĕн-ма туймастăп ирĕке?

Ларать пыра çемçе икерчĕ.
Вĕри-çке чейĕ. Юн шăнать!
Пылак сасси чуна систерчĕ:
Кĕтмен хăна. Кĕтмен хăна...

* * *

Ăспа пурнатпăр-ши эпир?
Чунпа пурнатпăр-ши?
Хăш чăнкă çыранпа эпир
Утса пыратпăр-ши?

Эп чăтлăха кĕрсе ӳксен,
Енчен лачакана,
Кам — ахрашса, кам — хӳхлесе
Тăн кĕртĕ-ши мана?!

Мана, сана, сире, пире...
Кам уçĕ куççене —
Хисеплеме кашни ире,
Кашни çĕр пусăмне?

Туятăп — халĕ хĕррипе
Утатпăр.
Уçăл куç!
... Туйса илинччĕ чĕрипе
Çакна Тӳре — улшуç.

* * *

Мĕнех вара? Мĕнех!
Пурнатпăр-ха,
Пĕр — майĕпен,
                пĕр — сиккипе.
Çилпе килен сăмах —
Вăл вĕçтĕр-ха...
Пур пурнăç пытăр
Хăйĕн еккипе...

Мĕнех вара? Мĕнех?
Пурнатпăр-ха,
Нумай чухне
Çукран та пур туса.
Ĕмĕтсемпе малах
Вĕçетпĕр-ха,
Çӳл тӳпене
Çутишĕн тав туса,
Пур кунсене —
Пурришĕн тав туса.

Пурнатпăр-ха,
Пурнасчĕ-ха...

## ЧЕЧНЯРА — ВĂРÇĂ

Çук сикме каçалăк урлă...
Пулнă вăхăт шутлама.
Алăкран шаккать халь хурлăх —
Килнĕ ывăл уйрăлма.

Юлашки çула ăсатăн
Кĕр-кĕр туй кĕрлес чухне.
Салтак амăшĕ, çăтатăн
Эс тăварлă куççульне.

Пĕрисем халь мул пайлаççĕ,
Чап пайлаççĕ — теприсем.
Камшăн, мĕншĕн юн тăкаççĕ
Чечняра ачамăрсем?!!

Итлесемччĕ, Çӳлти Турă!
Шеллесем хĕрарăма!
Кам курман, çакна ан куртăр —
Ачасем хыçне юлма...

* * *

...Хĕвелтухăç енне тĕмсĕлсе тинкеретĕп.
Мĕн илсе, мĕн парса тĕлĕнтерĕ-ши кун?!
Ав, умри пахчара улмуççи ретĕн-ретĕн...
Çак çурхи илемпе киленет-ха ман чун.

Ах, паха улмуççи!
Чечекӳ тăкăнсан та,
Савăнтарăн çынна эс
симпыл улмупа.
Пур еткерлĕхӳ сан. Пур малашлăху санăн.
Ыр çын çех танлашайĕ сан кăмăлупа.

Утса тухнă çула тăрăшсах шĕкĕлчетĕп...
... Хĕвелтухăç енне тĕмсĕлсе тинкеретĕп...

* * *

Курас марччĕ ман куç,
Ман хăлхам илтес марччĕ
Самантрах сăн-питне улăштарнă çынна.
Халь анчах кашкăрла, кашкăрла шăл хăйратчĕ,
Ак, куратăп умра эп чăн-чăн куяна.

Çук. Паян такăнатăп тесе шутламанччĕ,
Çут хĕвел ыр сунса ăсатсаччĕ çула.
Ах! Мĕн-ма-ши йĕрлерĕ мана çил-тăманĕ?! —
Шăнса кӳтрĕ чĕре çак асамлă çулла.

Çутă çул пиллесе чĕрре кĕнĕ сăмахăм...
Çак çула ăнланать кашниех хăйĕнле.
...Кĕтсе илтĕм ире чĕптĕм куç эп хупмасăр
Те ман савăнмалла, те —
выртса йĕмелле?!

* * *

Тĕлĕксем ман — пĕлĕмçĕ,
ăрăмçă хăш чух.
Çут хĕвелччĕ — пĕлĕтлĕ ...
Чĕтĕрет халь чун.

Тĕшмĕш тетчĕç хăшĕсем,
Калĕç:
«Анăрать».
Чун хускатмăш тĕлĕксем...
Усала...
Ырра...

* * *

Чуна хавас.
Çанталăка кура-ши?
Чупа-чупа ĕçлес килет паян.
Йĕри-тавра ыррине çех куратăп.
Тур панă кунăм мĕн тери пуян!

Çут хĕвелпе паян эп ăмăртатăп.
Парас килет пурне те ăшшăма
Çĕклем-çĕклем...
Парас çук татăк-татăк.
Чĕрем тулли сĕнетĕп юррăма...

Мĕскер акан — çавна выратăн, теççĕ.
Акасчĕ ман телейлĕх вăрлăхне.
... Чăн-чăн туссем чĕр шыв мана сĕнеççĕ.
Пур сĕнекен — кулса йăл! —
вил шывне.

* * *

Çавракa çĕр чăмăрĕ —
Çук тухма утса.
... Халь хуçа кĕр ăмăрĕ.
Лăпланап — туйса.

Шалкăм Çумăр,
Сивĕ çил
Ӳт-пĕве лăскать...
Усси пулмĕ вăй хунин —
Йĕрсене шăлать...

Пурнăçра ӳкни, тăни...
Тĕрлĕрен тивлет.
Тӳсĕмлĕх, кĕтме пĕлни —
Хăш чух чăн телей.

Иртĕ кĕç кĕр ăмăрĕ.
Пурнăç — пурнăçах.
Çавракa çĕр чăмăрĕ —
Шанмалли пурах...

## ТЕЛЕЙ

Телей вăл пĕчĕк ача мар,
Алă çинче йăтса çÿреймĕн.
Ырсассăн — канĕ,
    чар, ан чар...
Кайăк пулса хыçран вĕçеймĕн.

Телей вăл сад пахчийĕ мар,
Хÿме тытса çилтен сыхлаймăн.
Курма тивмен-тĕк пархатар,
Телейшĕн пирĕшти пулаймăн.

Телей симпыл чашкийĕ мар,
Пылне çисе ярсан — тек тулмĕ.
Телей — вут-кайăк,
    чĕпĕ мар...
Вăл читлĕхре нихçан та пулмĕ.

* * *

Чуна хĕсет шăв-шав...
Халь шăплăх. Мĕн çитмест-ши?
Мĕскер шыратăп шав,
Пĕр канăçа пĕлмесĕр?

Пĕр талăкран нихçан
Ик талăк пулас çук-çке.
Шăпа пире хуçа —
Лăпкать, парать-и çупкă...

Пăлхавçă кăмăла
Пĕр-пĕр чух хам акман-ши?
Çумлас чух, хăмăла
Пĕр шелсĕр çунтарман-ши?!

* * *

Эс хальхи модăпа пурăнсассăн
«Çĕнĕ» вырăс, чăваш... сан çумрах.
Хăш чухне макăратăн:
—Тархасшăн,
Çӳлти Турă! Каçар! Ан пăрах!

Сăмахна шутласа калаçмарăн.
Хакламарăн савни туйăмне.
Кайăксем те вĕçеç парăн-парăн,
Эс çӳретĕн çаплах пĕчченех...

Ытамне йыхăрать шурă хурăн:
— Ас илсем иртсе кайнă çула...
Телейпе тĕл пулма эс мĕн турăн?
...Çаврăнса килчĕ тепĕр çулла.

* * *

Шансан та, шанмасан та,
Ыйтсан та, ыйтмасан та —
Ман шухăшпа сăмах пĕр уйрăлми.
Кĕсье тулли пулсан та,
Вăл пуш-пушах пулсан та —
Нихçан та пулас çук эп шăл çемми...

* * *

Шав тăвалла утсан та,
Пĕр вĕçĕм такăнсан та —
Хальччен çулра пулманччĕ чарăнни.

Куçран пăхса кулсассăн,
Хыçран тапма пăхсассăн —
Чуна паха-и пурнăç пурăнни?!

АФРОДИТА*

Шуххăн култăн.
Питĕ хыттăн:
— Эпĕ, — терĕн, —
Афродита!
Афродита,
Афродита,
Пурнăçпа эс
Çăмăл пытăн...

Пĕвĕ — чăн та —
Шурă хурăн.
Сăнĕ — чăн та —
Çутă çăлтăр.

Савăн, кул,
Телейлĕ пурăн.
Тамăкран çех
Турă çăлтăр...

*Афродита — юрату Турри, илем символĕ.

## СОНЕТ

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Йăл! кулмасăр утăм тăвайманшăн?
Сар хĕвел тĕнчи вăл — ман нăхра,
Тĕксĕм пĕлĕт тĕрме пекех маншăн.

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Чун çине мăн çăрасем çакманшăн?
Усă кăмăл мар-ши ман юнра?
Сăнчăра татмашкăн хатĕр çыншăн.

Мĕншĕн эпĕ пысăк айăпра?
Хĕвĕме сулмаклă чул чикменшĕн?
Юлашки пĕр татăк çăкăра
Пайламашкăн хатĕр...
Анчах мĕншĕн
Юрламасть пӳрт умĕнче саркайăк?
Çылăх каçайми-ши пысăк айăп?!

* * *

Çӳп-çӳхе, черченкĕ çамрăк хулă.
Парнине куç савать кăлăхах.
Паркине умăмран илсе хурăп —
Ĕç валли çӳхе хулă паха.

Авкалатăп ăна, явкалатăп,
Эрешлетĕп хама кирлĕ пек.
Хама хам эп ĕç майăн калатăп:
Ачасем те çак вулă пекех...

* * *

Çунатлă кайăксем чĕнеççĕ...
Хаваслă кĕвĕсем хистеççĕ...
Ак, çил ачи хăвать хыçран,
Çĕн сăвăсем ыйтать манран.

Сÿнтерчĕ куллине хĕвел:
Çырма пачах пăрахрăн...
                    шел!..
Хура çĕре шăварчĕ çумăр,
Тумла каласрĕ,
                    пĕлĕт ăмăр:
— Лăпланăр! Пит-куçăра шăлăр,
Малашлăха пăхса,
                    йăлл! кулăр,
Çут сăнлă та тÿр чунлă пулăр...

Утатăп эп асăрханса,
Тĕреклĕх, çынлăх шыраса...
Ан йĕр, тÿпе!
Кул, çут хĕвел!
Кун-çул!
Сăввăмсемпе çĕнел!..

* * *

Пĕр талăк иртет,
Ик талăк иртет.
Эрне хыççăн — уйăх, çулталăк...
Мĕн чунăм кĕтет?
Мĕн кунăм кĕтет?
Тус-йыш кăмăлтан тăснă алă.

Утан утăмра,
Пурнан кунăмра
Мĕн чул çылăхсем!
Каçăлаç-ши?!
Кулап — юрăра,
Йĕреп — кулăра.
Пĕр тикĕс кунсем пулаяç-ши?

Юрлаç юрăра:
— Телей курăра?
Мĕскер вăл телей?
Кам ăнланнă?!
Чунпа кам — кăра,
Пурнать кам вăрах —
Чĕри — пайăн-пайăн вакланнă...

## ХАЛАЛСЕМ

АНТОЛИЙ ЮМАНА

Çăварлăхланă Эсир Парнаса,
Иккĕленмесĕр, хăюллăн утланнă,
Сĕллине хурса панă сапас,
Çавăнпа вăл аван ăратланнă...

Çул памасăр тăман никама,
Юнашар та лартса ярăнтарнă.
Çавăнпа такăнман урхамах,
Тав Турра! — Сирĕнпе тĕл пултарнă.

Савăнтарăр тăван халăха,
Сăввăрсем, юррăрсем янăраччăр.
Ватăлатпăр тени кăлăхах —
Иксĕлмест Сирте Турă хăвачĕ.

«ÇИЛ ÇУНАТ» *журнала*

— Хатĕр пул! —
терĕн эсĕ мана, —
Çак çулпа малалла ăнтăлма.
Тав тăватăп чунтан шăпана —
Вăл пилленĕ санпа тус пулма.
«Çил çунат»,
патăн мăшăр çунат.
Чăн чăвашлăх çуратрăн чунра.
Кунран-кун вăл хĕрўллĕн сунать,
Пур малашлăх, пур ĕмĕт умра...

## ВАЛЕРЬЯН РОМАШКИНА -
*«Канаш» хаçат редакторне*

Эпир шăватпăр, пурнăç шунă май,
Хăш чух чупас килсен те сиккипе...
Çак аслă çĕр çинче этем нумай.
Чăн сынсене шутлайăн пÿрнепе.

Чăн çынсене шутлайăн пÿрнепе.
Шăп çав шутра эс, Валерьян Ромашкин.
Шăватăн та — ерçместĕн пуррипе:
Мелсем шыратăн, хăв лавна туртмашкăн...

Пĕр чарăнми шыратăн эс мелсем.
Чĕнетĕн чăваша малтан мала...
«Канаш» тавра пĕрлешрĕç поэтсем.
Сан умăнта пуçа çех таймалла...

Ут малалла, мал шухăшлă редактăр.
Чăн-чăн чăваш.
Апла эс — чăн-чăн паттăр.

## ХАМА

Юрать пуль çĕр çине ансан та.
Çитет пуль тÿпере вĕçме...
Тăхăнса яр калуш е атă,
Пуçла ял пылчăкне виçме...

Хăв çаннуна хастаррăн тавăр.
/Хăй çавине туптать тăван./
Вăранмалла.
Самант халь — талăк.
Кайран çулталăк тав тăван.

ОЛЕГ МУСТАЕВА —
*«Еткер» передача редакторне*
*/Юбилей ячĕпе çырнă такмаксем/*

Ах, Еткер, Еткер, Еткер,
Мĕн сана паян пиллер?
Сан паян çуралнă кун.
Савăнса юрлать ман чун.

Юбилей сан, юбилей.
Эс пурри пире — телей.
Сенкер экран йыхăрать,
Вăл пире хăват парать.

Чăвашланчĕç чăвашсем,
Уçăлаççĕ куçĕсем.
Янăрать чăваш юрри -
Пит паха «Еткер» пурри.

Ĕмĕр пурăн эс, «Еткер».
Çĕнелсе çĕклен, ешер.
Юрататпăр чĕререн,
Тайма пуç сана пиртен.

## РАИСА САРПИНЕ

Эс ирĕлместĕн, ирĕлместĕн...
Унанă хытă чустаран.
Çулпа хытатăн, çемçелместĕн,
Хăш чух ÿксен те ураран.

Çынна шанатăн — тĕрĕслетĕн...
Чунна паратăн чăн çынна.
Кам такăнать — пырса çĕклетĕн.
Тĕксе ямастăн тăшмана.

Ялан шыратăн, вĕрентетĕн.
Ăша хыватăн çын ĕçне.
Сан тĕллевÿ — çĕклентĕр несĕл.
Ан юлтăр вăл юлхав хыçне.

## АНАТОЛИЙ ЧЕБАНОВА

Мĕн калайăн: чăнах та маттур,
Пур çĕрте те ятна асăнаççĕ.
— Чебанов-и??
Чăн-чăн драматург.
Праскине те чунтан юратаççĕ.

Çул паман та — çавах хăраман.
Ăс-тăнна хуплайман çав шыв-шурĕ...
Тăрăшни сан кайман харама.
Çĕр çинче янăрать халь çĕр юрă.

Вакламастăн нумай сăмахна.
Пьеса, сăвă...
хăйсем калаçаççĕ.
Утнăçемĕн саран сукмакна —
Пин чĕре сан патна ăнтăлаççĕ.

## АНАТОЛИЙ ЫРЪЯТА

Чӗмпӗрти питӗ сумлӑ ҫыравҫӑ.
Калаву-повӗҫӳ — чун ӑшши.
Ҫурма ҫул тӑвакан — чӑн хӑравҫӑ.
Ӗҫлекенӗн — тулатех тӗшши.

«Канаша» кунсерен чун кӗртетӗн.
Чӗрӗлсе тӑчӗ «Атӑл юрри».
Ачалла эс, Толя, хӗпӗртетӗн,
Йӑл! кулсассӑн поэзи Турри...

Мӗн тесен те — иртмест ӗмӗр тикӗс.
Ҫул ҫинче пур тумхах, шакӑр чул.
Ыр ята чӑннипех те эс тивӗҫ,
Анатолий Ыръят.
Ӗмӗр пул!

## СЕРТЕ МИШШИНЕ

Ӗлӗкрех нумай серте ҫисеччӗ --
Ҫуркуннен пӗрремӗш куракне.
Тен, серте поэт туса ӳстерчӗ?
Эп унрах куратӑп тупсӑмне.

Эсӗ те иккен унпа тус пулнӑ —
Ӳссе ҫитрӗн халь ҫӳлти шая.
Сертепех пуль ҫыхӑннӑ ҫак пулӑм.
Сӗткенне вӑл панӑ самаях.

Сан пекех эп витӗмлӗ ҫырман та,
Тӑрӑшатӑп танлашма, Серте.
Ҫынсенче яваплӑх хуҫалантӑр.
Вӑратмашкӑн пур хӑват пирте.

НИКОЛАЙ ЛАРИОНОВА -
*«Шевле» литпӗрлешӳ ертӳҫине*

«Шевле» ҫутипе ялл! ҫутатрӑн
Эс Чӗмпӗр ҫӗрне, Микулай.
Нумай таланта ҫул кӑтартрӑн,
Ӗҫлетӗн, шыратӑн пӗрмай...

Мухтатӑн, анчах мухтанмастӑн.
Ӑш туйӑм вылять сан чунра.
Шывра, Микулай, эс путмастӑн,
Ҫунмастӑн, Куля, эс вутра.

Ялан пӗлӗвне эс туптатӑн.
Шанатӑп — пулатӑн «маяк».
Пиллетӗп — ҫулу пултӑр такӑр.
Истори сана парӗ хак...

# ТУЙĂМСЕМ, ТУЙĂМСЕМ...
# ПУЛНИСЕМ, ПУРРИСЕМ...

## ШУРĂ ХУРĂН

Шурă хурăн, ырă ĕç эс турăн —
Туйăмсем çуратрăн чĕрере.
Сан пекех таса вĕсем, шап-шурă...
Савăнăç тулли кĕрекере.

Юррăма эс кĕтĕн, шурă хурăн,
Пурнăçа çутатрăн илемпе.
Шурă хурăн, сарăхмасăр пурăн,
Хуçăлмасăр çил силленипе.

Юррăма юрлатăр ăшă çил те,
Кайăксем юрлаччăр ывăнми.
Сан патна эп савăнăçпа çитĕп.
Шĕпĕлтетĕп танлăн, чарăнми...

## ЭП ТЕЛЕЙЛĚ ЭС ĂШШĂН КУЛСАН

Тĕл пулма Турă çырнă пире.
Пĕр шăпа вăл пилленĕ пире.
Пĕр çулпа юнашаррăн утар,
Пĕр-пĕрне ырă кун çех сунар.

Эп телейлĕ кун янкăр пулсан,
Эп телейлĕ эс ăшшăн кулсан.
Кил вучахĕ çунсан çулăмпа,
Çамрăк пулăп ялан чунăмпа.

Вăй-хăват иксĕлмест телейре,
Юнашаррăн тапсан ик чĕре.
Пĕр-пĕрне ăнланса хисеплер.
Пурнăç — тинĕс.
Пĕр танлăн ишер.

## ТĔЛПУЛУ

I

Тĕл пултăмăр.
Чăнах.
Асам сапать куçу...
Сăмах çине сăмах...
Юхать-çке калаçу:

Юратнă ĕç, çемье,
Пур пĕлĕш, тус-тăван...
Хавас ыйтса пĕлме.
Эс пуç тайса тăнлан.

II

Çак пĕчĕк тĕлпулу.
Умра мĕн чул шăпа...
Каятпăр ик çулпа.
Ан такăнтăр çулу.

Ан такăнтăр çулу,
Ан сÿнтĕрччĕ куллу.
... Çак пĕчĕк калаçу
Чунра хăварчĕ çуй...

* * *

Халь пĕр-пĕрне эпир сăнатпăр,
Шыратпăр мĕн çухатнине.
Ĕмĕрлĕхе, тен, уйрăлатпăр.
Çак тĕлпулу, çавах, парне.

Юр пĕрчисем çÿçне шуратнă.
Пит-куçунта çулсен палли.
Çапах та аякра-ха ватлăх.
Вăй-хăвату сан — куç тулли.

Куллу яланхи пек вăтанчăк,
Çак халăх шавĕнче çĕтет...
... Çунатлă ĕмĕт пурнăçланчĕ
Кĕтмен çĕртен.
Кĕтмен çĕртен.

* * *

Çĕкленӳ малалла çул хывать,
Тытнă ĕçĕм вун хут ӳсĕнет.
Юрăра пур асамлă хăват —
Урăхла эп курап тĕссене.

* * *

Чунран юрă шăранса тухсан,
Уй-хире ăш çил пулса вĕçсен,
Эп çӳретĕп пуçăма ухса:
Тӳпе-янкăр, кăмăллă çынсем.

* * *

Пулать иккен çапла та пурнăçра.
Калаççĕ: «Шурă».
Эс калан: «Хура».
«Хура-çке», — теççĕ.
«Шурă», — тетĕн эс.
Çавра — пур çыншăн.
Саншăн — тăват кĕтес.

«Мĕн тупрăн, — теççĕ, — эс ун çумĕнче?»
Кулатăн ăшшăн: «Маншăн вăл — тĕнче...»

## ЧĂЛАХ САМАХСЕМ

Ырă çак сăмахсем. Çепĕç çак сăмахсем,
Анчах чĕрене ăшăтмаççĕ вĕсем.
Ăшăтмаççĕ юна, лăпкамаççĕ чуна,
Çутатмаççĕ куна.
Ах, хăватсăр вĕсем!
        Ах, хăватсăр вĕсем! —
Çак чăлах сăмахсем.

* * *

Епле тупас-ши кăмăлна?
Ăçта тупас?!
Йăл куллăм ăшăтмасть сана,
Сăмах-турпас.

Çумрах. Çитме çук аякра.
Пăчланчĕ сас...
Хӳме умра, хӳме хыçра,
Ăçтан тухас?

Вăрман пек халăх.
Эп — пĕччен.
Эс — танлă чун.
Чĕресĕр пулĕ эсĕ. Тен,
Унта сив чул?

* * *

Эс каланă, эпĕ илтнĕ —
Пĕтнĕ çакăнпа.
Канăçа мĕскер-ши илнĕ? —
Хавшарăм чунпа.

Пăтăр-пăтăр, пăтăр-пăтăр...
Таталать пуль кĕç.
Пăлтăр-пӳлĕм, пӳлĕм-пăлтăр...
Çук пек урăх ĕç.

Эп каланă, эсĕ илтнĕ —
Пĕтнĕ курнăçу.
Шухăшлатпăр — пĕтнĕ, иртнĕ.
Чĕрĕ-çке кун-çул!

* * *

Çĕр шыва-çке саватъ.
Эп — сана.
Çак мана вăй паратъ,
Çак кăна.
Çак мана шуратать...
Çак мана хуратать...
Тӳпене пĕр çĕклет...
Пĕр çĕре ӳкерет...
Çакăнпа — чухăн эп...
Çакăнпа эп пуян.

* * *

Пĕчĕкскер. Чăмăр пысăкăш çех те —
Пурнăçра вăл пуласшăн хуçа.
— Кирлине, – тет, – эп хам валеçетĕп.
Сан шăпу курăнать ман куçа.

— Шăпана эпĕр хамăр тăватпăр, —
Хирĕçлетĕп, – ан хĕсĕн ялан.
— Çавăнпа кун-çулу, тен, тăварлă?!
Канашлатăн сахал манпалан.

Пурнăç çилĕ улать урăм-сурăм.
Ăнтăлатăп шăпа çулĕпе...
... Пурнăçра пысăк утăм эп турăм —
Канашлатăп ялан чĕрепе.

* * *

Шухăшламасăр калаçни
Канăçна илмест-и?
Тăрăхласа пăхни
Куçна йӳçĕхтермест-и?

Мăнкăмăллăху
Чĕрӳне чĕпĕтмест-и?
Ăшă куллăм çине тăрăнса
Такăнмастăн-и?
Асту! Ан ӳк!

* * *

Кĕркунне, епле ачаш пулсан та —
Çамрăклăх юлман сăн-питӳнте.
Ах, пĕчченлĕх!
Мухтавĕ пулсан та —
Капланать тăвар куççулӳнте.

* * *

Шăпа пиртен нумай хут аслă:
Кĕтменлĕхсем — çĕклем-çĕклем.
Кичемлĕхре те пур хаваслăх,
Ыратура та пур илем...

* * *

Эп самаях пĕлетĕп çав сана,
Эп пĕлнĕ чухлĕ эс хăвна пĕлместĕн,
Пĕр калăпа, пĕр виçене кĕместĕн.
Ултавсăр тарасу сан — эп кăна...

* * *

Ыратусăр пулмасть çухату.
Çухатусăр килмест юрату.
Кĕрешӳсĕр — шăм-шак та йăшать.
Кам тӳсет, кам чăтать — çав тупать.

* * *

Тĕксĕм каҫа ҫивĕч туйăм
Ҫурса кĕрсен —
Ҫĕн хăватпа эсĕ тулăн.
Ан яр тĕртсе.

Ырă ирпе ырă шухăш
Кĕрсен чунна —
Васкавлă утăм ту эс шуххăн
Хавас куна.

Ҫитĕнӳсем малта чупсан
Юланутпа —
Васка! Васка ална тăсса!
Кĕтмест шăпа.

Ҫаксем вара — ман ĕмĕтсем,
Васкаҫҫĕ кун курма вĕсем.

* * *

Чечек парнелеменшĕн каçаратăп.
Хавассăн капăрлатчĕрех çĕре.
Ыр сăмаха — çухатасран упратăп —
Тăсасшăн тĕрлĕ енлĕ ĕмĕре.

Чечек парнелеменшĕн каçаратăп.
Чун каçармасть усаллăн пăхнине.
Çĕкленейми-çке усăнать çунатăм
Элек, ултав сăхсассăн чĕрене.

Кун-çул шанать таптанă чечек евĕр.
Куç çухатать асамлă çутине.
Ыр сăмахсем пĕрне-пĕри парнелĕр —
Лăпкаччăр, ачашлаччăр кунсене.

* * *

Çăвара уçма ансатчĕ:
Пĕр сăмах çеç каласаччĕ...
Мĕн хĕсет-ши кăкăра?
Пуш-пушах-çке халь чĕрем.
Пуш чĕре пĕр пăт таять пуль...
Çурăлса кĕçех каять пуль.

Çăвара уçма ансатчĕ —
Харăс ик чĕре аманчĕ...

* * *

Ан шыра илемлĕ сăмахсем.
Ан шыра чуна касаканне.
Юмахра çех çăтмахри кунсем.
Упрама пĕр Турă панине.

Йĕппе пусă ан тăрăш чавма:
Ăшăх пусă шăрăхра типет.
Айăпшăн пĕлсессĕн каçарма,
Çемьене йышу çитсен савма
Сив хĕлле те çут хĕвел çиçет.

* * *

Тăвар тăкса ятăм,
Тăвар.
Эй, Туррăм, кампа ятлаçап?!
Тен, кăмăлсăр пулĕ тăван?
Тус-тантăш пухать-ши çӳп-çап?..

Тен, эс уйрăлма мел шыран?
Шăлса тăвара пуçтаратăп.
Ишсе тухас çук вăл шывран...

Ан пултăр шăв-шав.
Тăрăшатăп.

* * *

Мĕн-ма сана ятламалла
Теприн патне çул такăрришĕн?
Пĕр юрă, пĕр — куççуль юхнишĕн
Мĕн-ма сана ятламалла?

Мĕн-ма ăна ятламалла
Ун чунĕнче кăвайт пурришĕн?
Сÿнес чух ялкăшса çуннишĕн
Мĕн-ма ăна ятламалла?

Мĕн-ма сире ятламалла?
Ăна эсир ыйтса илмен-çке.
Паха уйра чечек ÿсет-çке.
Сире, сире ăнланмалла!

Анчах епле ăнланмалла
Теприн чунне хĕн кышласассăн?
Вăл пайăн-пайăн пайлансассăн?
Ун терчĕ — юрату пулсассăн
Айăп камра шырамалла?

* * *

Юрла, шухă çил, эс юрла,
Мана ан мухта, ан хурла,
Ан çавăр ÿпне пурнăçа...
Юрла, иртнипе курнăçам.

Юрла, шухă çил, эс юрла,
Ан пулччĕ мăкалнă çурла.
Вĕрсен — тикĕс вĕр, ан алхас,
Кассан — юн тухмалăх эс кас.

Савас-тăк — чунтан савăнас,
Манас-тăк — инçе вăркăтас.

* * *

Çулçăсем ÿкеççĕ ман ума,
Тĕксĕм пĕлĕтсем те çывăх, çывăх.
Кам каланă — йывăр уйрăлма?
Тĕл пулма кайран — пин-пин хут
йывăр.

Кайăк хур вĕçет.
— Кайри — мала!
— Кик! Ки-как! — хурланнăн сас параççĕ.
Ĕмĕр виçĕнмест утăмпала.
Кайăк мар, çулсем тек таврăнмаççĕ.

Пит кичем: çаралнă йывăççем,
Çывăх, çывăх тĕксĕм пĕлĕтсем те.
Ĕмĕтсем çеç çутă, ĕмĕтсем...
Пурăнасшăн, çунатсем ĕнсен те...

* * *

Юхать, юхать, юхать-çке çемĕ...
Асаилӳ, аса килни...
Ах, çемĕ, çемĕ, эс — вĕçевлĕ...
Вĕçсе кайсассăн — килĕн-и?

Эс килĕн, килĕн! Çухалаймăн!
Хускатăн чунăм хĕлĕхне.
Чун-вартине веçех калаймăн.
Хут çех упрать хăшне-пĕрне...

Çунаттусем ачаш ытла та.
Нумай-и кирлĕ хуçăлма...
Килсем, хускат чуна ытарлăн,
Ан пар усмашкăн пуçăма.

* * *

Мĕн-ма шаккатăн кантăкран,
Лаштра йăмра, ыйха путмасăр?
Манман, манман! Асра, асрах!
Вăл çеç пурнать пĕр сас-хурасăр.

Вăл çеç пуль тутлă тĕлĕкре.
Пар лашапа çула тухар-и?!
Мĕскер чăрмавĕ çак тĕтре?
Çул тупĕ чун-чĕре кăварĕ.

Ĕмĕлкесем пулса тăрса
Сывлар-и ассăн, ассăн, ассăн ...
... Йĕрет, кулать çил кăшкăрса:
— Çул çухалать тăман тухсассăн...

* * *

*Санпала тӗлпулу шырамастӑп.*
*Р.Сарпи*

Эп санпа тӗлпулу шыраман.
Ҫӗн телей паракан — ҫуркунне.
Йышӑнман, йышӑнман, йышӑнман...
Йышӑнман эсӗ ҫын вырӑнне.

Чун кӗтесӗ — пытанчӑк тӗпел,
Вӑл упратчӗ ачаш куллине.
Шеллемен асамне ҫут хӗвел —
Ҫитерейнӗ унта ӑшшине.

Уҫса яр, ҫӗнӗ кун, кантӑка, —
Юрӑ юхтӑр.
Тӑнла эс, илтсем!
Юратсан-мӗне кирлӗ тупа?
Пӗр сӑмахсӑр туяҫҫӗ чунсем.

* * *

Ют пахчана кӗрсе улма татмастӑп:
Йӳҫех пулсан та — хамӑн панулми.
Ҫын ӗмӗтне пӗр шухӑшсӑр татмастӑп.
Пӗлетӗп: иртес йӗр хӑварми.

Ҫулӗ йывӑр, ҫул тумхахлӑ — кармашатӑп.
Ай-ай! Пит чӑнкӑ — ишӗлет ҫыран...
Черченкӗ пӗвӗм тӳсессе шанатӑп,
Эп юлӑп сывӑ — аллуна парсан.

* * *

Каллех ав çут тĕнче вăраннă.
Хĕвел шевле тăкать каллех.
Кама — манман. Кама-тăр — маннă.
Кама-тăр — çу, кама — хĕлле...

Палланă сукмакпа утма-и?
Унта — хуçа ӳсен-тăран.
Чĕрем анчах çавах ман майлă:
— Чупсам — çитен.
— Ӳксен?
Тăран.

Тăран? Тăрайăп-ши тĕреклĕн?
Асат хуççассăн мĕн усси?
— Пуçна ухса утни кĕрнеклĕ, —
Пăшăлтатать ăс-тăн сасси...

* * *

Чăрмантармăп тек.
Канăçлă пурăн.
Вĕчĕхтертĕм пăртик, пĕр кана.
Суккăр тĕвĕ чунра çыхса хурăп:
Ман тĕллевĕм —
манмашкăн сана.

Вăхăтпа, тен, сипленĕ суранăм,
Пулмасассăн санпа юнашар.
Чун кӳтсен те —
тасалăх упранĕ.
Халь таса юрату хакра мар.

## САСĂ

Ăшă çил евĕр,
Килет кассăн-кассăн...
Пурнăç пит хаклă
Асра вăл пулсассăн.

Лăпкă та тарăн —
Сиплет чунăма.
Пин кĕвĕре
Хăналать кунăма.
Вăл уйрăлсассăн
Манран вăраха,
Эп çухататăп
Калас сăмаха —
Хаклăран — хаклă
сасă.

* * *

Ним те пулман пирĕн хушшăмăрта.
Туятăп эп — пулма та пултараймĕ.
Миçе сăнар тăрать пуль умăнта...
Çавна таса чĕремçĕм ăнланаймĕ.

Çăтатăп тарăхса ыратăва.
Эй, Турăçăм!
 Манмашкăн хал парсамччĕ!
... Хам тилмĕреп çавах юратăва:
— Ăш ыйхинчен ăна эс
 вăратсамччĕ!

* * *

...Ыйту — чăрмав,
мăнкăмăллăх — ансат.
Пуҫна ҫĕкле те — ут ҫĕр
хуҫи евĕр.
Ах, куҫусем! Унта мĕн
чул асап!
Ҫак пурнăҫра пĕр нуша ҫех —
тӳлевсĕр.
Каласа пар мана хуйху ҫинчен.
Чуна уҫса итлем
ним сиктермесĕр.
Ав, мăшăр кайăк ват йăмра ҫинче.
Епле телейлĕ! Туссăр ҫын — телейсĕр.

Тулли кĕсье. Анчах укҫа —
тус мар.
Тус пеккисем, инфляци пек, вылянчăк.
Ҫук мулăм.
Чунăм ăшшине пайлар.
Туссем пуртан пуль
ыранхи кун — шанчăк!

* * *

Кавир тӗртесшӗн эп чечексенчен,
Сарса ӑна хурасшӑн сан умна.
Пин туйӑм вылӗ унӑн айӗнче,
Ҫӗр кӗвӗ илемлетӗ ыр кунна.

Хӗрли, шурри, тӳпе пек кӑвакки...
Илемсӗр тӗс кӗртместӗп эп унта.
Кун-ҫулӑн питӗ сарлака сакки —
Ӑраскалу ан кайтӑр ҫумӑнтан.

Шутланнӑ пек пулайӗ-ши эреш?
Савсах тӗртетӗп хаклӑ кавире.
Юратупа каварлӑх — йӗкӗреш:
Кам калӗ-ши?
Мӗскер кӗтет пире?!

## СӐМАХ

Сӑмахра ҫӳп шырап кӑлӑхах.
Суя питлӗ пулман нихӑҫан.
Чӗрене хирсе тухнӑ сӑмах
Кунӑнта чун уҫҫи пултӑрах.

Усала сирсе ятӑр вӑр-вар,
Хуйхуна ҫапса ваттӑр чӑл-пар,
Ҫут хӗвелӗн ҫутаттӑр ҫулна.
Чӑн-чӑнах вӑл.
    Выляв ҫӑмхи мар.

* * *

Тĕлленмен те,
Ах анчах!
Эс — умра. Йăл! кулă.
Хĕмленмест ман чун пачах.
Илĕртмест çак пулăм.

Эс ширанă — тупнă мул,
Çынлăх эп ширанă.
Иккĕн утнă тăвăр çул
Шыв-шурпа хупланнă...

Тĕлсĕр-пилсĕр калаçу
Кам чунне вăраттăр?
Каснă — татнă.
                Ним те çук.
Ик çулпа утатпăр.

КАЛАÇУ

— Мăн кăмăлна кăшт пĕчĕклет.
— Тирпейлĕх вăл мăн кăмăл-ши вара?
— Ун пек çын пурнăçра пĕтет.
— Пит сумсăр-ши тасалăх пурнăçра?
— Укçу пулсан илен веçех.
— Эп мулсăрах çитерĕп çак куна.
— Çĕре ансам! Ытла вĕçен!
— Каçар. Хальччен сутман Эп
                хам чуна.

* * *

Ăшах та мар,
Сивех те мар.
Кун — чун уççийĕ!
Атя-ха пĕр çынла утар,
Ман чун хуçийĕм.

Мана итле, сана итлем...
Эпир пĕр мар-и?
Килĕшӳре чăн-чăн илем,
Чăн канăç мар-и?

Пуçпа шутлатăп эпĕ...
Эс
Чунпа шутлатăн...
Эп çавăратăп халь кĕтес...
Эс — салататăн...

Ăшах та мар,
Сивех те мар,
Кун — чун уççийĕ!
«Мана кăшт ирĕке кăлар», —
Тет чун хуçийĕ...

* * *

Çынна кӳрентерме нумай-и кирлĕ?!
Чĕлхе чараксăр, ыткăнать сăмах.
Шанмасть чĕре. Пулмастпăр урлă-пирлĕ.
Кураймансем, ан тив, палкаччăрах.

Халь çуркунне. Çĕршыв юрланăçемĕн
Уçатăп яриех чӳречене.
Чĕнет урам. Юхать асамлă çемĕ.
Аса илетĕп иртнĕ кунсене.

Уйрăлупа эп туйăма ĕнерĕп.
Сана та кĕтĕ тĕрĕслев — çулу.
Сывах-ха пирĕн юрату кĕперĕ.
Туятăп эп — малта-ха тĕлпулу.

* * *

Ыр хыпара илтме те ырă.
Вăратрĕ вăл пур-çук вăя.
Мĕн чул ĕçленĕ эп паян!
Çавах хама туймастăп ырнăн.

Ырлас килет, савнас килет.
Çĕр чăмăрне ман ыталасчĕ.
Мĕн аванни — манран пиллев,
Çак ăшă туйăмпах пурнасчĕ.

Пур телее пайлас пулсан,
Çăкăр татки пек, пайăн-пайăн,
Чи-чи мăнни — пулайĕ сан.
Ун пек туссем тата нумай-и?

## ÇĔРШЫВĂМ — ТЕЛЕЙĔМ

* * *

Ман пĕр çĕршыв,
Эп урăха савмастăп.
Пуянлăхне савмастăп, —
пурнăçне.
Эп ют çĕрте пуласлăха
курмастăп.
Кам ют çĕрте хавас туять хăйне?!

Ман пĕр çĕршыв.
Вăл хӳтлĕх, канлĕх маншăн.
Вăл маншăн — йӳçĕ пыл,
пылак шерпет...

Вăл маншăн — çут сăнар.
Эп çав сăнаршăн
Хама шеллемĕп.
Вăл çакна сисет.

## ПĔРТĂВАНСЕНЕ

Сăра та пур, хуплу та пур, шăрттан...
Куç ăна мар, тăван, сана тинкернĕ.
Эпир кунта халь улттăн пĕртăван.
Пире анне сăвап парса ÿстернĕ.

Ĕçме-çиме килте те пултаран.
Пĕрне-пĕри час-час курни паха.
Пĕрне, ав, ватлăх çапнă урараn.
Тепри, ав, ÿкнĕ чăтайми хуйха.

Ăшпиллĕ калаçу — чĕре сури.
Васка-васка пур сăмаха çăтатăп.
Епле аван-çке тус-тăван пурри!
Эп вĕсенче малашлăха куратăп.

## ШЎТЛЕСЕ

Чашăк-тирĕк — шăкăр-шакăр...
Ман куççулĕм — шăпăр-шапăр...
Йўç сăмах чунра йўçет...
Çурăлатăп эп кĕçех.

Алăк — шалт! хупăнать.
Йўç сăмах чунра юлать.
Хыттăн-хыттăн пускалатăп.
Урлă-пирлĕ уткалатăп.

Шыв сапатăп — вут сўнет...
Таврăнас. Çемье кĕтет.

* * *

Ир-ирех пуҫтартăм вырăна.
Ҫурт-йĕре тирпей кӳртмеваскарăм.
... Ыр куна пуҫларăм ырăпа.
Санăн умăнта ман пысăк парăм...

Симĕс ҫулҫă, ҫĕмĕрт – шур чечек.
Йăл! кулан хĕвелĕм, кайăк-кĕшĕк.
Вĕтĕр-шакăр тухнă кĕшĕл-кĕшĕл.
Ҫут тĕнче мĕнле пуян, чечен!

Ах! Мĕнле ҫăлас ҫак илеме?!
Юнашар ҫӳрет-ҫке усалли те...
Илеме пĕлмест вăл шеллеме:
Чунĕ путсĕр, путсĕр ун алли те...

Ыр хăват вăл пурпĕр вăйлăрах.
Пĕр унпа сар кунăм чĕрĕ мар-и.
Аслă Турă! Хăватна парах.
Таврăнми ҫухалтăрччĕ тип-шарĕ...

* * *

Инçе çула паян тухатăп,
Кĕтмен çĕртен, кĕтмен çĕртен...
Пур-çук укçа-тенке пухатăп,
Тен, тус-тăван парать кивçен?

Тăванăм çук. ăçтан тупам-ши?
Пускил укçа тытман çур çул.
«Çĕн чăвашсем» патне утам-ши?
Мĕскĕнленем-ши:
— Турă пул!?

Процентпала укçа илетĕп,
Хушса тӳлетĕп икĕ хут.
Эп парăм тӳлесех тӳнетĕп,
Пăвать мана çĕршыв-панкрут.

* * *

Çунашкана вăйпах туртатăп,
Çак михĕре — шалу укçи.
Çан тавăрса чуста çăратăп.
Пур çăкăр... Килĕм-йышăм, çи!

Ача-пăча канфет çиесшĕн,
Е ас тивесшĕн кăлпасси.
Тата ăçта çитсе килес-ши?
Шарaçăн пулĕ-ши усси?

Турри парсан, татах, тен, пулĕ —
Е çăнăх парĕç, е песук?
Шăвать çуна... Пуяншăн — кулă,
Ăс-тăншăн — пĕтсе çитнĕ сум.

## МĂШĂРĂМА

Вĕçеç кайăксем парăн-парăн,
Кĕрлет çут çанталăк умра.
Утатăп санпа юнашаррăн,
Туятăп — тĕреклĕх çумра.

Пурнан пурнăçа шĕкĕлчетĕп —
Хури нумайрах е шурри?
Сăнра — пирĕн пурнăç пичечĕ,
Телей — пирĕн пĕрлĕх пурри.

Пулнах пурнăçра ăнланманлăх
/Çуратнă пире ик анне/,
Ăс панă Турри каçармалăх,
Тĕреклĕ ачамăр — парне.

Вĕçеç кайăксем парăн-парăн,
Кĕтрет — çут çанталăк умра.
Пуласчĕ ялан юнашаррăн, —
Телей хуçалантăр чунра.

* * *

Ватăлатăп-и, е ăсланатăп —
Килĕшменлĕх ÿсет чунăмра.
Шуррăн курнă — сархайнăн куратăп,
Тĕксĕм курнă — халь çуттăн умра.

«Те хытатăп?» — тесе те шутлатăп,
Тирпее-ши вĕрентĕм ку чух? —
Темиçе хут виççен çех касатăп, —
Телее çеç виçме майĕ çук.

Эп шутлатăп, шутлатăп, шутлатăп...
Эп виçетĕп, виçетĕп çич хут.
Анчах мĕншĕн пĕрмай такăнатăп?!
Тăванпа танлашмасть çичĕ ют.

* * *

Арçын тытса пырать хушамата...
Хĕрарăм — çурт-йĕре, çемье илемĕ.
Пит тăрăшса пайлатăп вăхăта,
Анчах пĕчĕкленмест ниçтан çĕклемĕм.

Юлас килмест пĕрре те пурнăçран:
Унта васкамалла, кунта чĕнеççĕ...
— Пăрах сăввусене! — Эс кăшкăран.
Çырма пăрахрăм. Кĕвĕсем хистеççĕ...

Çак сăвă-кĕвĕпе хăпартланса,
Тен, çак куна çити эп пурăнатăп?
Çук, çÿреместĕп муза шыраса,
Эп ун валли чун-чĕрене уçатăп.

## ЯЛА КАЙМА ТУХСАН

Тăван ял йыхăрать айлăмра.
Эп çулра. Ман аннеçĕм кĕтмест.
Çамрăк чун. Хăрама вăл пĕлмест.
Çурхи кĕвĕ анчах чунăмра.

Таллăтанăп вăй çитнĕ таран.
Виçĕ утăм...
Ак, улттă, ак, çиччĕ...
Пĕтĕмпех эпĕ ӳкĕп тара.
Туртăм пур-тăк, каç кӳлĕм, тен, çитĕп.

Чĕркуççийĕм таран сĕлкĕш-шыв.
Çурхи шыв урана пĕçертет.
Юлайсан çакăн хыççăн эп сыв...
Çук-тăк — вутăш кĕлли витерет.

## ТУССЕНЕ

Выç ларман — тата мĕн кирлĕ?
Ачасем те — куç тулли.
Пурăнмастпăр урлă-пирлĕ,
Çын çинче те — чи сумли.

Таччăн хупăнса ларатпăр
Пĕтерсен килти ĕçе.
Телевизорпа супаптăр, —
Ылмашать унпа веçех.

Пит сайра шăнкăравлатпăр,
Вăрăмланчĕ тейĕн çул...
Пĕр-пĕрне мансах пыратпăр —
Чун хытать е тимлĕх çук?

## ÇУРАЛНĂ КУН

Сăпас! Сăпас! Хресчен уявĕ.
Ак пан улми сĕткен сапать.
Симпыл чашки... Епле кун савăк!
Умра — сĕтел тулли апат.

Çак тулăх ир куçа эп уçнă,
Çĕре вăратнă кăшкăрса.
Таса чĕреллĕ, ырă куçлă
Пулма пилленĕ çĕр, тулса.

Мана чĕр пурнăç пиеленĕ,
Юлма хăйман эп парăмра:
Вăй пур таран ятне çĕкленĕ
Хастар ĕçре, çĕн юрăра...

Сăпас! Сăпас! Пуçа таятăп.
Юнпа эп çыхăннă санпа.
Сăпай пуласчĕ, ырă ятлă —
Сан пек пуласчĕ чунăмпа.

## ТĂВАН ЯЛĂМА

Çук тулли юханшыв. Çук вăрман.
Çеçенхир, çеçенхир, çеçенхир...
Сан çинчен чаплă юрă çырман,
Пурпĕрех эс пилленĕ çут ир.

Ăшăх шывĕ — пĕр тан Atăлпа,
Умри сад — пĕртăван вăрманпа.
Уйăм-хирĕм — пуян çăкăрпа.
Ялăм-шывăм — тулли кăмăлпа.

Çеçенхир ачашланă мана,
Вăштăр çил çупăрланă мана.
Савнă ял... Курнăнах тăвана,
Пултарап-и ăна эп манма?!

Пуç çитмест пуль сире пуç тайсан,
Юрласассăн — çитмест пуль сăмах.
Вĕçсе çитĕттĕм майĕ пулсан
Сан пата кĕттермесĕр вăрах.

* * *

Асамлă юрăсен хăвачĕ!
Ăшран ăна эп кăларман.
Атте юрри ак вăйлăх пачĕ —
«Уй варринче лаштра юман»...

Анне юрри ыр кăмăл пачĕ,
Сăпка юрри — анне парни.
Чун-чĕрене чĕртсе хăварчĕ
Савни юрри: «Эс — чи савни!»

Самант — лăпкать чуна ачашшăн,
Самант — илет те силлесе...
Çапах та кун çути вăл маншăн —
Юрлатăп хурлăха сирсе...

## САД ЧЕЧЕКРЕ

Тăван ялта пахча ăсти — аттеччĕ.
Улмуççисем, чие те хурлăхан...
Ыр кăмăла вĕсем саваççĕ, тетчĕ.
Атте вилсен сад юлчĕ хурлăха.

Ача-пăчашăн ырă-çке ытла та.
Сад пахчинче çӳрес килет татах.
Тăван атте ытарлăн ыталанăн
Пăшăлтатаççĕ çулçисем: — Тавах.

Тавах, анне! Атте садне упрарăн.
Савма вĕрентрĕн илеме пире.
Сан пиллевне чун-чĕререн ямарăм:
Сад лартрăм. Вăл шап-шурă чечекре.

## АННЕНЕ

1

Вăхăтсăр эс ватăлнă, анне,
Кун-çулу, чăнах, ансат килмерĕ,
Парăнмарăн. Йăх-ăру еткерĕ —
Ачусем сиплеççĕ чĕрӳне.

Алă пӳрнисем те пĕр пек мар.
Эпир йышлăн: миçе тĕрлĕ кăмăл!
Пĕрлĕх пур-тăк — инкекре те çăмăл, —
Йыхăр çеç — пулатпăр юнашар!

2

Пурнăçунта тăшман пулман,
Йывăр ĕçе те парăнман, —
Виçесĕр тӳсрĕн хуйхуна.

Çурхи шыв пек инçе çулсем,
Пĕр самант пек иртен кунсем
Сӳнтернĕ санăн куллуна.

Юр пĕрчисем, юр пĕрчисем...
Мĕн-ма ӳкеççĕ-ши вĕсем?!
Шап-шур шуратрĕç сан пуçна.

## АЧАЛĂХ

Илтетĕп сасă: кăлтăр-кăлтăр...
Уяв парни çĕлет анне.
Чĕречерен сăнать çут çăлтăр —
Куç хывнă капăр кĕпене.

Тем кĕтнĕн çăварне ав карнă
Атте парни — кăвак пушмак.
Мăлатукне атте хăварнă:
Пиччем шаккать хĕрсех шак-шак.

Ирпе ирех тухса эп чупăп,
Вĕл вĕçĕ чĕнтĕрлĕ çуха.
Савнăçпала çĕкленĕ чунăм,
Çапах та — манаймасть хуйха.

Сăнаççĕ ман хыçран вăраххăн
Аннен шывланнă куçĕсем.
... Хĕрĕх пĕртен утать хăраххăн,
Хĕнпе туптанчĕç çулĕсем.

## САЛАМ СИРЕ

Салам сире, тăван хирсем!
Юратнă ял, салам сана та!
Эсир савса кĕтсе илсен
Эп ача евĕр савăнатăп.

Пÿрт умĕнчи лаштра йăмра,
Тапса тăран таса çăлкуçĕ,
Эсир, анне пек, — асăмра.
Юрлать чĕрем, ăс-хакăл уçă.

## АСАННЕНЕ

Темскер асилтĕн те эс — ăшшăн култăн.
Тÿрлетрĕн вашаватлăн тутăрна.
Çак самантра мĕскер, мĕскер-ши куртăн?
Мĕнле вут-çулăм хыпрĕ кăкăрна?

Çак ыр самант йăл! кулчĕ те —
пăнч çĕтрĕ...
Ик çуллăх арăм... ик пепке-парне...
Таса чунпа эс ывăнмасăр кĕтрĕн
Чĕрÿ туйсассăн та вăл çуккине.

Яш ĕмĕр вăхăтлăх тесе калаççĕ,
Эс вылятмарăн нихăçан ăсна...
Мăнукусем хуткупăса тăсаççĕ
Аслашшĕ евĕр çăмăллăн, ăста.

## ЫВĂЛĂМА

Тĕрĕсне каласан — кам юратĕ?
Икĕпитлĕх — чунна килĕшмест.
Эс — ман пурнăçăн пысăк турачĕ,
Юнпала парăнни, тен, сÿнмест?

Ах, ан сÿнтĕрччĕ, юлтăрччĕ чĕрĕ,
Сая каймĕччĕ çул шутлани.
Кĕске — кунăм, пит вăрăм-çке çĕрĕм.
Çутă çăлтăрăм — эс суйманни.

Савăнатăп сан тимлĕ уттушăн,
Пил хăвачĕ çитсе пытăрах.
Тус-тăван ал тăсман чух — хăрушă.
Эс ална тăсмасан — хăрушрах.

* * *

Тунсăхлатăп сана, тăван ял.
Тăван кил, эп сана
тунсăхлатăп.
Тунсăхра усăнать манăн ал.
Ĕç çук пек,
урлă-пирлĕ утатăп.

Çамрăк мар. Тулăх килĕм.
Çемье.
— Çав-çавах ял енне тинкеретĕп.
Çав-çавах илĕрттет тăван ен,
Илĕртет-çке сăвапла еткерлĕх...

## АТТЕНЕ АСАНСА

Атте, сана аса илетĕп,
Санран халь эпĕ аслăрах...
Ачалăха çитсе килетĕп,
Тус-тантăша унта курап.

Сад пахчинче чупса çӳретĕп.
Улми-çырли...
Ах, чун уççи!
Сим панулми татса çиетĕп.
Пылак çырла — ывçи-ывçи...

Эс çанă таварса ĕçлетĕн,
Аппа-тете те тăрăшать...
... Ăçта эс?! Ма пит час çĕтетĕн?!
Мана кил-йышăм йыхăрать...

## ÇУМĂРЛĂ КУН

Пит кӳреннĕ-ши тӳпе?
Чарăнми йĕрет.
Тухаймастпăр кунĕпех.
Пит кичем пире.

Анчăк каçăхса вĕрет,
Выльăх макăрать.
Самăр вăкăр мĕкĕрет,
Сивĕ çил улать...

Путнă машинсем кĕрлеç,
Муталаç çĕре...
... Калăн, тӳпепе пĕрле
Пĕтĕм ял йĕрет...

* * *

Пĕр анне пире çуратнă,
Пĕр анне ăс панă.
Çĕр-анне савса лăпканă.
Пурнăç пире ватнă...

Пĕр хĕвел пире çутатнă,
Турă çул кăтартнă...
Тĕмсĕлсе тен, /йăх ăратлă/
Пурнăç пире ватнă...

«Пĕртăван. Пĕр пек пуль», — теççĕ.
Тăрăш та — пулаймăн.
Тивлете ыйтса илмеççĕ.
Суйлăн та — тытаймăн.

Никам пек те пулас марччĕ,
Ман хам пек пуласчĕ.
...Пур тăванăн терчĕ-шарĕ
Тарăн йĕр хăварчĕ...

## ÇЕМЬЕ

Кам кăна пуль ăс памарĕ.
Кам кăна пуль вĕрентмерĕ —
Сиртен асли пур-ши халь?
Чĕвĕлти чĕкеç эс халĕ.
Ăмăрт кайăк — упăшку.

Сив сăмах калас çук эсĕ,
Сив куçпа пăхас çук эсĕ.
Хăпартас çук вăл сасне.

Эс пĕçернĕ апат тутлă.
Тав сăмахĕ хутлă-хутлă.
Сумра мар усал сăмах.

Ай-хай, пурнăç, эс — çăтмах.
Тĕлĕк мар пулсан.
Чăнах.

КАНАШСЕМ

Капланса вĕсем килеççĕ...
Сӳрĕккĕн пăхкаласа.
Манăн айăпа виçмеççĕ.
Йĕкĕлтеççĕ:
«Эс — таса!»

Шырама хушаççĕ айăп
Хытă такăнсан — çынра.
Эпĕ, калăн, ăсран тайлăк,
Хушнисем каллех пуçра...

Итлесе çитет,
аллас пуль
Алапах çав купана...
Кирлине çеç хăварас пуль.
Панă ăс анне мана...

# КУÇАРУСЕМ

Елена КУВШИННИКОВА

* * *

Хуйхăран çут сăнар
эп унаймăп.
Шăн чунра ăшă юн юхас çук.
Ултавпа сан патна çул тупаймăп, —
Авăра чăмтарать
ун пек çул...

* * *

Чăрмав, ўпкев юлать кая.
Тек пулмĕ пурнăç — тамăк.
Ман пысăк савăнăç паян, —
Ўкет çўлтен шур мамăк.

Çул çуталать, чун çĕкленет.
Чĕре кĕтет — йĕрке килет...
Умра асамçă шурă хут.
Тапса сикейрĕ сăвă ут...

Людмила РТИЩЕВА

* * *

Тĕлĕке тек кĕме эс пăрахрăн.
Халь эп лăпкăн туятăп хама.
Эп — хăраххăн халь. Эс те — хăраххăн.
Айăплас çук эпир никама.

Ик çулпа халĕ эпĕр утатпăр,
Кам —васкать, кам — çӳрет майĕпен...
Туйăма тĕрĕслет-ши çак тапхăр?
Тен, пире уйăрать пуçĕпех?

Шăлсене эпĕ çатăр çыртатăп.
Чĕрене кăшăллап ункăпа...
... Хам çавах сан патна туртăнатăп.
Мĕн патне çитерет-ши шăпа?

* * *

Кăчăк туртрăн — эп килтĕм вĕçсе...
Тен, васкарăм? Халь юлтăм пĕччен.
Ĕмĕрлетĕп, савниçĕм, кĕтсе...
Кам пĕлет? Кĕтмелле хăçанччен?

Шутламан эс мана манасса.
Тĕлĕкри пек туятăп хама.
Кирлĕ мар-тăк, савни, каласам.
Эп санпа тĕлпулу шыраман.

Сӳнтерместĕп чунри хĕвеле...
Тен, эс килĕн, туйса çав ăшша.
Эп — хĕрарăм. Апла — кĕтмелле...
Юлас марччĕ анчах кулăша...

## Владимир ДВОРЯНСКОВ

* * *

Шап-шурă çĕмĕрт пирĕн пахчара.
Шур чечекпе вăл çĕр питне те витнĕ.
Калатăн эсĕ:
— Сулхăн урамра.
Урамра çех-и? Чунăм шăнчĕ витĕр.

Пĕлмен, пĕлмен çанталăк кăварне.
Сана парне — шап-шур çеçке парсаччĕ.
Юратăва-шим шăнтрĕ çав парне? —
Каларăн эсĕ:
— Ман халь урăх каччă.

Çак вăхăтра тĕл пулнă эп сана.
Çак вăхăтра чунра çуралчĕ çуй...
Халь эп çанталăк каварне шанап.
Чĕрем ăнланчĕ — пулмĕ пирĕн туй.

* * *

Хĕл те çитĕ сисĕнмесĕр.
Кайăк-кĕшĕк сайрарах...
Çурт-йĕрсем, темле, илемсĕр.
Çут хĕвел те сулхăнрах.

Илĕртмест халь шурă хурăн,
Кичемленчĕ ват йăмра.
Кăмăла хуçать çак курăм,
Вăратать шеллев чунра.

Çулçăсем шăнса пăрланчĕç,
Иртнĕ ĕмĕрĕ вĕсен.
...Тунсăхпа тулса шупкалчĕç
Манăн вичкĕн куçăмсем.

Владимир ДВОРЯНСКОВ

* * *

Шăппăн килсе çитрĕ çутă ир,
Тĕлпулусенчен хăранă евĕр.
Куçа-куçăн унпала эпир.
Вăл та питĕ евĕк, эп те евĕк.

Ытамне чĕнет:
манпа пулсам.
Киленсем, паян ман кăмăл ырă...
Çут хĕвел хĕлхем сапать, курсам,
Ешереç садсем, пучахлă тырă...

Ах, епле киленмĕн çак кунпа.
Пурăнатăп эпĕ çăмăлттайăн.
Ман юратнă ĕç, илем кунта.
Çак пуянлăхран ăçта-ха кайăн?

Елена ЯГОВКИНА

* * *

Ыйха путасчĕ хăвăртрах!
Ыйха! Ыйха! Ыйха!
Кĕттермĕн эс мана вăрах,
Хăвалăн ман хуйха.

Çак тĕлĕкре, çак юмахра
Çук пирĕншĕн хуçа.
Телей çăмхийĕ ытамра,
Вăл ачашлать куçа.

Эс те, мăнаçлăха манса,
Ачашшăн йăл кулан.
Мана та юратма ансат,
Ватмашкăн сив чула...

Васкас ман тĕлĕке, васкас!
...Канлĕх кайран ăçтан тупас?!

* * *

Касатăп, паянтан — тататăп...
Çисе çитет пуль чĕрене.
Çитес çук халăмçăм, туятăп:
Куратăп мăшăр куççене.

Тархасласа вĕсем пăхаççĕ
Пĕр сан çине, пĕр сан çине...
Пур айăпа та каçараççĕ,
Епле улталăн вĕсене?!

## Ирина БАЖЕНОВА

* * *

Çут çăлтăр кантăкран сăнать,
Çап-çутă çĕр паян.
Йăмра ав пуçĕпе сулать,
Вăраннă ыйхăран.

Ман куçăмсем те тăр уçах.
Хăратăп çывăрма.
Çак çĕр пуласшăн пек хуçа —
Вăл килнĕ уйăрма...

Вăл уйăрасшăн пек санран.
Шаккать сехет, шаккать...
Мĕн-ма каймасть-ши умăмран?
Ватать шăмма-шакка.

Ах, хаклă çыннăм, каçарсам.
Пĕр айăпсăр çын çук.
Вунпилĕк çул.
                    Çаксем чаксан
Тўрленĕччĕ ман çул.

Санпа эп пулăттăм, санпа.
Хăтарăп инкекрен.
Эп илемленĕттĕм сăнпа
Чун панă эмелрен.

...Шăпланнă ыйхăра йăмра.
Ах, вăхăт! Эс — хуçа.
Вунпилĕк çул тăрать умра...
Ман куçăмсем уçах.

Светлана МАТЛИНА

* * *

Чӗнмен сана, чӗнмен!
Хӑвах эс килтӗн!
Тен, кил ӑшши ҫителӗксӗр сана?
Тен, пурнӑҫу урӑххипе сан пилсӗр?
Ун пек хӗвел ӑшӑтаймасть куна.

Ман тӗксӗм кунӑм ҫӗнелсе ҫуталчӗ:
Кашни сехет, кашни минут — уяв.
Ҫут ӗмӗтӗм ҫӗнелчӗ, хавхаланчӗ,
Ҫине-ҫинех вӑл кӑларать хунав...

Сӑмах ӑшши, ӳт-пӳ ӑшши пайланнӑ.
Халь ҫаврӑнтӑмӑр вӑрӑ-хураха.
Паян куна эп — санӑн,
эсӗ — манӑн.
Упранӗ-ши телейӗм вӑраха?!

* * *

— Килтӗм эпӗ.
Элле пайлаймастӑр?!
Сӳннӗ сӑнӑм, шупкалнӑ ман сас.
— Ӑҫта пултӑн?
Мӗн-ма каламастӑн?
— Хурлӑхра. Ун ҫинчен мӗн калас?

— Ах, мӗн-ма хурлӑха эс ҫул тытнӑ?
— Шӑпапа тӗл пулма, шӑпапа...
Ах, йӗрлет! Ах, йӗрлет тимӗр тылӑ...
Тӗл пулма ан парсамӑр унпа!

ТУПМАЛЛИ

Сунатăп ырă кун ........................ 3
Халалсем ........................ 35
Туйăмсем, туйăмсем ........................ 41
Çĕршывăм-телейĕм ........................ 63

Валентина ТАРАВАТ
/Игнатьева Валентина Николаевна/

**ВЕСЫ ДУШИ**

Стихотворения

Редактор Эктель В.П.
Художник Александрова Е.В.
Художественный редактор Сидоров В.П.

Сдано в набор 15.01. 2001 г. Подписано к печати 01.02.2001 г.
Формат 60 x 84 $^{1}/_{64}$. Гарнитура Pragmatica. Усл. печ. л. 2,56.
Уч.-изд. л. 2,65. Тираж 1000 экз. Цена свободная.

Издательство «Калем» Писательского фонда ЧР «Калем».
Лицензия ЛР № 030927 от 10.09.99 г.



Валентина Игнатьева ТАРАВАТ Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнчи Кĕçĕн Упи ялĕнче çуралса ÿснĕ. Пăвари медицина училищине, Чĕмпĕрти педагогика институтне пĕтернĕ. Раççей Писателĕсен союзĕн членĕ, Раççей культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш композиторĕсен Ассоциацийĕн членĕ, çавăн пекех "Пике" журналăн, Чĕмпĕр облаçĕнчи поэтсен "Моя Родина" конкурсăн, Культура управленийĕн лауреачĕ. Унăн Мускавра, Чĕмпĕрте, Саратовра, Шупашкарта чăвашла тата вырăсла сакăр кĕнекс пичетленсе тухнă. Икĕ чĕлхепе çырать. Хĕрĕх пилĕк юрă авторĕ вĕсем "Хаклă сасă" кĕнекере тухнă. Хастар автор куçару ĕçĕнче те вăй хурать.

Халĕ В. Тарават Чĕмпĕр облаçĕнчи Аслă Нагаткинра пурăнать, професси училищинче ĕçлет, виçĕ ансамбле ертсе пырать.